Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

83 (7400) № ✻ Юн кун, 2006 ҫулхи октябрӗн (юпа) 4-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Агропромышленноҫ комплексне аталантарма

## Чӑваш ялӗ валли ҫӗнӗ майсем уҫӑлассӗ

Ӗнер пирӗн районта Чӑваш Республикин Президенчӗ Н.В. Федоров, Чӑваш Республикин ял хуҫалӑх министрӗ М.В. Игнатьев пулчӗҫ. Вӗсем район активӗпе тӗл пулчӗҫ. Ӗҫлӗ канашлура "Агропромышленноҫ комплексне аталантарасси" наци проектне пурнӑҫлас тӗлӗшпе ума тухса тӑракан задачӑсене сӳтсе яврӗҫ.





Николай Васильевич уйрӑммӑн ҫакна палӑртрӗ, ял хуҫалӑхне аталантарассинче, ял пурнӑҫне ҫӗнетессинче уйрӑмах пысӑк майсем уҫӑлассӗ. Ҫитес икӗ ҫулта республикӑри чӑваш ялӗсене хушма 25 миллиард тенкӗ килмелле. Халиччен кун пекки пулман.



Пирӗн районти ял хуҫалӑхне аталантарма 2005 ҫулта 109 миллион тенкӗ уйӑрнӑ пулсан, 2006 ҫулта 210 миллион та 159 пин тенкӗпе тивӗҫтернӗ.

Ҫак цифрӑсем тата палӑрмаллах ӳсме пултараҫҫӗ, енчен те эпир малашне те Мускавпа килӗштерсе, тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеме пултарсан. Ун чухне чӑваш ялӗ тата пысӑкрах укҫа-тенкӗпе тивӗҫӗ.

ЧР ял хуҫалӑх министрӗ М.В. Игнатьев хӑйӗн сӑмахӗнче ял хуҫалӑхне малашне ҫӗнӗлле аталантарма кирлине палӑртрӗ. Кивӗлле ӗҫленипе малалла кайма ҫук. Патшалӑх миллиардшар тенкӗлӗх пулӑшу панӑ чухне ҫак самантра усӑ курма пултармалла.

Сӑн ӳкерчӗксенче: президиумра ЧР Президенчӗ Н.В. Федоров, ЧР ял хуҫалӑх министрӗ М.В. Игнатьев тата район пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов; ял хуҫалӑх министрӗ Муркашсене те ҫӗнӗлле ӗҫлеме чӗнет.

Ыран – Учительсен пӗтӗм тӗнчери кунӗ

### ПЕДАГОГИКА ӖҪӖН ХИСЕПЛӖ ӖҪЧЕНӖСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНӖСЕМ!

Сире Учительсен пӗтӗм тӗнчери кунӗ ячӗпе саламлатӑп!

Ҫӗршывӑн тивӗҫлӗ гражданинне, аталаннӑ тата социаллӑ активлӑ ҫынна пӑхса ӳстересси – питех те пысӑк ответлӑх тата чыс. Ахальтен мар ӗнтӗ сирӗн профессие авалтанпах пысӑк хисепре пулнӑ, кашниех хӑйне ӑс парса пулӑшса пынӑ ҫынсен ячӗсене асра тытать.

Педагог ӗҫӗ-хӗлӗ пултарулӑхпа уйрӑлми ҫыхӑннӑ. Обществӑна халӗ пуҫарулла педагогсем, культурӑпа ӑс-хакӑл енӗпе ҫӳллӗ шайра тӑраканнисем кирлӗ. Республикӑра шкулсен обществӑлла экспертизине ирттерни лидерсене – пултарулла учительсене тата ҫӗнӗлӗхсемпе усӑ куракан вӗренӳ учрежденийӗсене палӑртма май пачӗ. Вӗсен опытне пур ҫӗрте те сармалла, ку вӑл массӑллӑ пулӑм пулса тӑмалла.

Юлашки ҫулсенче республикӑра вӗренӳ ӗҫӗнче татӑклӑ улшӑну пулса иртрӗ. Хальхи ҫӗнӗ оборудованипе тивӗҫтернӗ шкулсен хисепӗ ӳсет. Интернет сечӗ Чӑваш Республикинчи вӗренӳ заведенийӗсене Раҫҫейӗн ытти регионӗсемпе тата чикӗ леш енчи ҫӗршывсемпе ҫыхӑнтарчӗ. Йӗркеллӗ ҫулсем, шкул автобусӗсем, тӗслӗх библиотекӑсем – ҫаксем пӗтӗмпех вӗренӳ системине пахалӑхлӑ ҫӗнӗ шая ҫӗклеме май параҫҫӗ.

Эпир сирӗнпе тӗллевлӗ ӗҫлесе пынипех республикӑра приоритетлӑ наци проекчӗсене пурнӑҫа кӗртме ҫирӗп база туса хума май килчӗ. Анчах та вӗренӳ услугисемпе тивӗҫтересси хальхи вӑхӑт требованийӗсене тивӗҫтертӗр тесен тумалли ӗҫсем ҫук мар-ха. Сирӗн пӗлӳпе опыт, пуҫарулӑх тата лартнӑ тӗллев патне ӑнтӑлни ку задачӑсене ӑнӑҫлӑ татса пама май парасса шанса тӑратӑп.

Сире хӑвӑрӑн юратнӑ ӗҫӗре чун хушнӑ пек пурнӑҫласа пынишӗн чӗререн тав тӑватӑп. Пурсӑра та ҫирӗп сывлӑх, оптимизм, ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем, телей тата юрату сунатӑп.

**Чӑваш Республикин Президенчӗ Н.В. ФЕДОРОВ.**

**Уяв ячӗпе районти педагогсене РФ Патшалӑх Думин депутачӗ Павел Семенов та ӑшшӑн саламлать.**

### ХИСЕПЛӖ УЧИТЕЛЬСЕМ, ВӖРЕНТӲ УЧРЕЖДЕНИЙӖСЕН ӖҪЧЕНӖСЕМ, ВОСПИТАТЕЛЬСЕМ, ПЕДАГОГИКА ӖҪӖН ВЕТЕРАНӖСЕМ!

Сире пурне те професси уявӗпе – Учительсен пӗтӗм тӗнчери кунӗ ячӗпе– чун-чӗререн саламлатӑп.

Учитель ӗҫӗ мӗн ӗмӗртенпех сумлӑ та пархатарлӑ пулнӑ. Эсир ачасене ӑс-тӑн панипе пӗрлех вӗсем чӑн - чӑн ҫын пулса ӳсчӗр, тесе тимлетӗр. Паян информатизацине анлӑ ҫыхӑну тапхӑрӗнче сирӗн яваплӑх татах та ӳсет. Ҫӗнӗ технологие алла илсе, ачасене тарӑн пӗлӳ памалла. Вӗсене йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме, пурнӑҫра хӑйсен вырӑнне тупма вӗрентмелле. Ҫакна валли эсир хӑвӑрӑн ӗҫе, ачасене юратни, вӗсен пуласлӑхӗшӗн ҫунса тӑни кирлӗ. Ҫак пархатарлӑ енсем сирӗнте нихӑҫан та иксӗлмессе, малашне эсир татах та пуҫарулӑрах пуласса эпӗ шансах тӑратӑп. "Вӗренӳ" приоритетлӑ наци проекчӗ вара сире ҫӗнӗлле татах та ӳсӗмлӗрех вӑй хума хавхалантарса пырӗ.

Хисеплӗ вӗрентекенсем! Район, республика, ҫӗршыв пуласлӑхӗ сирӗн тӑрӑшулӑхӑрпа пуҫарулӑхӑртан, ачасене мӗнле вӗрентсе воспитани панинчен нумай килет. Кӑҫал ӑс-хакӑлпа чун аталанӑвӗн ҫулталӑкӗнче ҫакӑн пӗлтерӗшне уйрӑмах лайӑх туятӑр.

Сире хӑвӑрӑн тивӗҫӗре тӳрӗ чунпа пурнӑҫлама ырлӑх-сывлӑх сунатӑп. Ҫӑмӑл мар ӗҫӗрте вӑй-хал та, чӑтӑмлӑх та, чун ӑшши те ҫиттӗрчӗ сирӗн. Пурне те ҫирӗп сывлӑх, ӑнӑҫу, творчествӑлла хавхалану, телей сунатӑп.

**Район пуҫлӑхӗ Ю.А. ИВАНОВ.**



Районти пултарулла педагогсенчен виҫҫӗн кӑҫал 100-шер пин тенкӗ Раҫҫей Президенчӗн парнисене тивӗҫрӗҫ. Вӗсенчен пӗри – Калайкасси шкулӗнче физкультурӑна вӗрентекен Виталий Тимофеевич Моисеев.

В. ШАПОШНИКОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.

Октябрӗн 8-мӗшӗнче – ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗсен суйлавӗ

## Суйлавччен 3 кун юлчӗ!

"Вӗренӳ" наци проекчӗ

## Пахалӑхлӑ пӗлӳ парасси– тӗп вырӑнта

***Вӗренӳ ӗҫӗнчи наци проекчӗ пурнӑҫа мӗнле кӗни пирки сӑмах пуҫарнӑ май, ҫакна ниепле те палӑртмасӑр иртме ҫук: Чӑваш Енӗн социаллӑ-экономика аталанӑвӗн стратегийӗнче палӑртнӑ енсем Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ сӗннӗ вӗренӳ ӗҫӗнчи наци проекчӗпе пӗр килет. Ҫавӑнпа та республикӑпа районшӑн вӗренӳ ӗҫӗнчи наци проекчӗ ют мар, мӗншӗн тесен асӑннӑ наци проектӗнче палӑртнӑ мероприятисем пирӗн республикӑра пурнӑҫа кӗме пуҫлани темиҫе ҫул ӗнтӗ. Мӗнлерех-ха унпа ҫыхӑннӑ халиччен кӑтартусем? Тата мӗнле ҫӗнӗлӗх илсе кӗрӗ наци проекчӗ районти вӗренӳ учрежденийӗсене? Учительсен кунӗ ҫитнӗ май район администрацийӗн вӗренӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗн пуҫлӑхӗ Л.И. МОЧАЛОВ районти вӗренӳ ӗҫне наци проекчӗн шайӗнче аталантарасси пирки каласа пачӗ.***

– Чӑннипех те, вӗренӳ ӗҫӗнчи наци проектне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртме пирӗн республикӑра та, районта та малтанах тивӗҫлӗ условисем туса хунӑ. Вӗренӳпе пурлӑх бази те паянхи кун ыйтнине тивӗҫтерет, вӗренӳ учрежденийӗсенче ҫӗнӗлле ӗҫлессин опычӗ те ҫителӗклӗ таран пуҫтарӑннӑ. Вӗренӳ сечӗсене ҫӗнетсе улӑштарас ӗҫре тӗрлӗ модельсем пурнӑҫа кӗчӗҫ. Кашни ача пахалӑхлӑ пӗлӳ илме пултартӑр. Акӑ, мӗн чи кирли пирӗншӗн. Юлашки 6 ҫулта 6 шкула реконструкциленӗ. Районти 10 база шкулне, ҫав шутран 3 ресурс центрне, паянхи вӗренӳ оборудованийӗсем вырнаҫтарнӑ. Вӗсенче пысӑк квалификациллӗ специалистсем ӗҫлеҫҫӗ. 800 ытла ачана ҫав шкулсене 10 шкул автобусӗ турттарать. Районта вӗренӳ учрежденийӗсен ҫӗнӗ моделӗсене тунӑ. Вӗренӳпе культура комплексӗсемпе центрӗсем ялти халӑхшӑн ӑс-хакӑл культурин центрӗсем пулса тӑчӗҫ.

Вӗренӳ пахалӑхне хак памалли тепӗр мел вӑл – пӗрлехи патшалӑх экзаменӗ. Пирӗн район ҫак эксперимента 6 ҫул хутшӑнать ӗнтӗ. Ҫулсеренех пӗрлехи патшалӑх экзаменне хутшӑнакансен йышӗ те ӳсет. 2006 ҫулти вӗренӳ ҫулӗнче 11 класран вӗренсе тухакансем пурте математикӑпа пӗрлехи патшалӑх экзаменне тытрӗҫ. Ытти предметсемпе – суйласа илсе: вырӑс чӗлхипе, историпе, обществоведенипе, физикӑпа, химипе, биологипе. Тӗпчев ҫакна кӑтартса парать. Муркаш лицейӗпе Нискассинчи, Муркашри вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухакансен результачӗсем – чи лайӑххисем. Пӗрлехи патшалӑх экзаменне тытни вӗренекенсене шкултах пахалӑхлӑ пӗлӳ илсе пахалӑхлӑ професси пӗлӗвне илмелли ҫул ҫине тухма май пачӗ: ӑҫта пурӑннине пӑхмасӑр, ашшӗ-амӑшӗн укҫа-тенкӗ пуррипе ҫуккине пӑхмасӑр.

**(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.).**

Росгосстрах – 85 ҫулта

**Страховани уйрӑмӗн Муркаш районӗнчи хисеплӗ ӗҫченӗсем!**

**Муркаш район администрацийӗ пурне те Росгосстрах 85 ҫул тултарнӑ ятпа саламлать**

Страховани услугисен Раҫҫейри рынокӗн аталанӑвӗн историйӗ Госстрах, хыҫҫӑн вара Росгосстрах историйӗпе тачӑ ҫыхӑннӑ. Страховани рынокӗнче тӑнӑҫ ӗҫлесе пыни, ӗҫ-хӗлӗн универсаллӑ формисемпе усӑ курни, страхованин тата инвестици политикин пахалӑхӗпе эффективлӑхӗ компанин шанчӑклӑх рейтингне ӳстерессӗ.

Страховани пайӗ районӑн экономикӑпа социаллӑ аталанӑвне тивӗҫлӗ тӳпе хывать, ҫынсемпе предприятисене страховани хӳтӗлевӗ парать.

Сире малашне те професси тӗлӗшпе ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем, творчествӑлла ӗҫ, палӑртнине пурнӑҫа кӗртме ӑнӑҫу пултӑр.

Сире тата сирӗн ҫемйӗрсене сывлӑхпа телей, тӑнӑҫ пурнӑҫпа ӑнӑҫу сунатӑп.

**Район пуҫлӑхӗ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Росгосстрахӑн районти филиалӗн ӗҫӗ-хӗлӗпе, малашлӑх тӗллевӗсемпе 3-мӗш страницӑра паллашӑр.**

### Ҫырӑнтару-2007

### Ҫитес ҫул илсе тӑма

***Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2007 ҫулхи пӗрремӗш ҫур ҫулта илсе тӑма ҫырӑнтараҫҫӗ. 6 уйӑха ҫырӑнмалли хак – 148 тенкӗ те 26 пус.***

***Хаҫата вӑхӑтра ҫырӑнса илме тӑрӑшӑр.***

**Район хаҫачӗн редакцийӗ.**